# Шупашкарăн лăпкă каçĕсем

Ахальтен сире хĕрсем савман пуль,
Ахальтен савман пуль каччăсем.
Çамрăк чух кам ыйăхне татман пуль
Шупашкарăн лăпкă каçĕсем.

Шăпчăксем каçхи вăййа тухсассăн,
Шапчăксем савсассăн пĕр-пĕрне,
Шăпчăк пек çав юрă юрласассăн,
Кам тупмасть пуль хăйĕн шăпчăкне.

Çамрăксем те пĕр-пĕрне саваççĕ —
Пĕр пек мар-ши пирĕн ĕмĕтсем.
Саншăн çеç саркайăксем юрлаççĕ,
Чечеке лараççĕ çĕмĕртсем.

Çăлтăрсем пиншер шăрça тăкаççĕ,
Ма хитре-ши Атăл каçĕсем?
Куç илмесĕр сан çине пăхаççĕ,
Салтакран тин килнĕ каччăсем.

Ахальтен сире хĕрсем савман пуль,
Ахальтен савман пуль каччăсем.
Çамрăк чух кам ыйăхне татман пуль
Шупашкарăн лăпкă каçĕсем.

*Урташ, В. Шупашкарăн лăпкă каçĕсем : [сăвă] // Урташ, В. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран : сăвăсемпе поэмăсем / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С. 77-78.*